Тарăн та çирĕп пĕлӳшĕн

Пурнăç çулĕпе утма хатĕрлетпĕр

«Вĕрентӳ» наци проектне пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлесе пырса иртнĕ çул Раççейри чи лайăх вĕрентӳ заведенийĕсем Раççей Федерацийĕн Президенчĕн премине тивĕçрĕç. Вĕсен шутĕнче Муркаш лицейĕ те пулчĕ. Преми илессине конкурс йĕркипе туса ирттернĕ. Претендентсен инноваци тата эксперимент ĕçнехĕлне, вĕрентӳ пахалăхĕн кăтартăвĕсене те шута илнĕ.

2005 çултан тытăнса лицейре вĕрентӳ процесне кашни

вĕренекен енĕпе хăйне евĕрлĕ йĕркелессипе ĕçлесе пыратпăр. Çавна шута илсе вĕрентӳ çулĕн пуçламăшĕнче лицеистсем вĕренсе тухсан малашне хăйсем епле вĕрентӳ учрежденийĕнче вĕренессине палăртаççĕ. Класс ертӳçисем ачасене Чăваш Енри тата Раççейри аслă вĕрентӳ заведенийĕсемпе, вĕсене вĕренме кĕмелли правилăсемпе паллаштараççĕ. Çакă вара лицеистсене хăйсен вĕрентӳ енĕн кирлĕлĕхне палăртма май парать. Кайран вара вĕсем хăш енпе çине тăрарах ĕçлемеллине палăртаççĕ. Çавна валли вĕсенчен пурте кашни предмет тĕлнех вĕрентӳ шайне палăртакан паллăна палăртать. Çапла вара кашни вĕренекен хăйĕн вĕрентĕвĕн содержанине йĕркелет. Вĕренекенсем мĕн суйласа илнине кура лицей администрацийĕ харпăр хăй вĕрентӳ маршруччĕсене палăртать.

Вĕрентӳ предмечĕсен расписанине йĕркеленĕ чухне те кашни вĕренекен мĕнле предметсене суйласа илнине шута илетпĕр. Расписанипе пĕр вăхăтрах виçĕ предмет вĕренессине пăхса хунă. Кашниех хăйне килĕшекен предмета суйласа илме пултарать. Кун пек туни вара класпа урок системинчен уйрăлса профильпе ушкăн мелĕ çине куçма май парать.

Хальхи вăхăтра классенче тĕрлĕ шайри ачасене тĕл пулатăн. Ку е вăл предмета вĕренессине классене кура мар, профиль ушкăнне кура йĕркеленĕ. Çакă вĕренекенсен харпăр хăйĕн вĕренӳ çул-йĕрне тĕрĕсрех палăртма май парать. 2005 çулта Чăваш Республикин Вĕрентӳ тата çамрăксен политикин министерствин «Лицей условийĕнче вĕрентӳ процесне харпăр хăйне кура йĕркелесси» проектне пурнăçласа лицее «Республикăри эксперимент площадки» статус панă.

2006-2007 çулсенчен тытăнса лицейре кадетлăх аталанать. Лицей администрацийĕ районти çар комиссариачĕпе тата шалти ĕçсен пайĕпе килĕшсе лицеистсем кадетсен профиль ушкăнĕнче вĕренессине йĕркелерĕмĕр, занятисем ирттерме класс хатĕрлерĕмĕр. Ку енĕпе вĕрентӳ ĕçне аталантарма профиль программисене те йĕркеленĕ.

Лицейре вĕрентӳ учрежденийĕсен ĕçне обществăпа патшалăх енчен ертсе пырассине аталантарассипе ĕçлесе пыратпăр. 2003 çулта попечительсен канашне йĕркеленĕ, лицей ĕçĕ-хĕлĕн обществăлла экспертизине ирттернĕ.

Çулленех кунта вĕренекенсем тĕрлĕрен олимпиадăсене, конкурссене час-часах хутшăнаççĕ, хăйсен пĕлӳ шайĕ лайăх пулнине кăтартаççĕ.

Пирĕн патра вĕренекенсенчен ытларахăшĕ аслă вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕни те вĕрентӳ пахалăхĕ пирки калать. Кунта чи малтанах И.Н. Ульянов ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх университетне, И.Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх педагогика университетне, Чăваш патшалăх ял хуçалăх академине, кооператив институтне асăнмалла. Пирĕн патран вĕренсе тухнисем хамăр республикăра кăна мар, Мускавра тата ытти хуласенче те вĕренеççĕ.

Лицеистсем районти наукăпа практика конференцийĕсене активлă хутшăнаççĕ. Унта хутшăнакансен йышĕ ӳссе пырать. 2004-2005 вĕренӳ çулĕнче районти конференцие 19 тĕпчев ĕçĕ тăратнă, вăл шутран 5-шĕ призлă вырăнсене тивĕçнĕ.

Пирĕн коллектив Чăваш патшалăх университечĕ ирттеркен «Малашлăха тăвакан пĕрремĕш утăм» республикăри наукăпа практика конференцийĕсене те активлă хутшăнать. 2003-2004 вĕренӳ çулĕнче унта 15 вĕренекен хутшăннă, призлă вырăн йышăннисем 6-ăн пулнă. 2004-2005 вĕренӳ çулĕнче вара конференцисене 20-ĕн хутшăнчĕç тата 7-ĕн малти вырăнсене тивĕçрĕç. 2005-2006 вĕренӳ çулĕнче «Малашлăха тăвакан пĕрремĕш утăм» конференцие 9 ĕç тăратнă, 5-шĕ призлă вырăнсене тивĕçнĕ.

Кунпа пĕрлех çавă та палăрăмлă самант. Вĕренӳри ӳсĕмсемшĕн çулленех лицейре вĕренекенсем район администрацийĕн пуçлăхĕн стипендине тивĕçеççĕ.

Çавăнпах ĕнтĕ Муркаш лицейĕ Раççей Федерацийĕн Президенчĕн премине çĕнсе илессин конкурсĕнче çĕнтерме пултарчĕ. Пĕр миллион тенкĕ укçа пире лицейăн техника тата методика базине çирĕплетме, педагогсен квалификацине ӳстерме май пачĕ.

Лицей администрацийĕ çĕнĕ информаци технологийĕсем çине пысăк тимлĕх уйăрать. Çавăнпах ĕнтĕ Президент премийĕн чылай пайне куллен кирлĕ техника хатĕрĕсем, оборудованисем тата вĕрентӳ хатĕрĕсем туянма усă куртăмăр. Кусем вĕсем интерактивлă хăма, плазма экранĕсем, мультимедийлă проектор, вэб-камера, компьютер техники, пăралуксăр компьютер сыхăнăвĕ т. ыт. те. Ку вара пире вĕрентӳ мелĕсене анлăлатма майсем туса пачĕ. Нумай учитель-семшĕн халĕ уроксенче çĕнĕ информаци технологийĕсемпе усă курасси яланхи япала. Вĕренекенсем кирек хăçан та компьютерсемпе усă курма, Интернета тухма пултараççĕ.

Библиотека бази çинче медиа-центр йĕркелерĕмĕр. Ăна пур предметсем тĕлĕшпе те электронлă учебниксемпе, видеофильмсемпе комплектланă. 2006 çулта 5-ĕн кĕркуннехи каникул кунĕсенче Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче вĕренсе хăйсен квалификацине ӳстернĕ. 2-ĕн вара ноябрĕн 21-24-мĕшĕсенче Мускавра Раççей вĕрентӳ форумĕ йĕркеленĕ вĕренӳре пулчĕç. Пĕтĕмлетсе каласан, пĕр миллион тенкĕ пире лицейри вĕрентӳ пахалăхне татах ӳстерме май парĕ.

Юлашкинчен шкулсенче вĕренекенсене çавна каласа хăварасшăн. Эсир аслă вĕренӳ заведенийĕсене вĕренме кĕме пахалăхлă пĕлӳ илес тетĕр пулсан, сире эпир лицейре кĕтетпĕр. Аякри ялсенче пурăнакансем валли интернат пур. Кăçалхи апрелĕн 14-мĕшĕнче пирĕн пата вĕренме кĕме экзаменсем ирттеретпĕр. Гуманитари енĕпе вĕренме кăмăллисен вырăс чĕлхипе тата литературипе, Раççей историйĕпе, техникăлла енне суланнисен математикăпа тата физикăпа экзаменсем тытмалла. Çавна та пĕлтеретпĕр. Чăваш патшалăх университетне вĕренме кĕрес текенсем валли олимпиада заданийĕсем хатĕр, вĕсене лицейре илме пулать. Заявленисене апрелĕн 10-мĕшĕччен йышăнатпăр. Ырă сунса кĕтетпĕр сире.

Н. СМИРНОВ,
Муркаш лицейĕн директорĕ.

Сăн ӳкерчĕксенче: кадет ушкăнне çӳрекен вĕренекенсем; обществознани енĕпе ирттеркен уçă урок вăхăтĕнче.

Çамрăк çемьесене – хăтлă çурт-йĕр

Патшалăх пулăшăвĕпе усă курар

Районта Раççей гражданĕсене хăтлă çурт-йĕрпе тивĕçтерес енĕпе йышăннă приоритетлă наци проектне пурнăçа кĕртсе пырассипе сахал мар ĕç туса ирттернĕ. Ку ыйтăва район администрацийĕ куçран вĕçерт-мест, çак ĕçе туса пырассипе тата çынсем хушшинче ăнлантару ĕçне туса пыма ответлă çынсене палăртнă, пурнăçламалли ĕçсен планне çирĕплетнĕ.

Социаллă ипотека кредичĕ шучĕпе иртнĕ çул 5 çемьене 800 пин тенкĕ уйăрса панă.

Хальхи вăхăтра РФ Президенчĕн Указĕпе килĕшӳллĕн çамрăк çемье çурт-йĕр туянма е тума патшалăх пулăшăвĕ илме пултарать. 2006 çулхи август-сентябрь уйăхĕсенче кредит илессипе перекет банкĕн районти уйрăмне 28 çамрăк çемье документсем тăратнă, 25 çемьене 11148,94 пин тенкĕлĕх кредит уйăрса панă. Каялла тавăрса памалла мар патшалăх субсидийĕсене республика бюджетĕнчен 22 çемье пĕтĕмпе 1486,846 пин тенкĕ илнĕ.

«Ялсен 2010 çулчченхи социаллă аталанăвĕ» тĕллевлĕ программăпа килĕшӳллĕн 2006 çулта ялта çурт-йĕр çавăрма патшалăх пулăшăвне илессин тĕллевлĕ программипе 14 çамрăк çемье 2045,61 пин тенкĕ тата ялта ĕçлесе пурăнакан 8 çемье 901 пин тенкĕ илме пултарнă.

Кунпа пĕрлех вырăнти бюджетран çурт-йĕр тума тата туянма 29 çемьене пĕтĕмпе 2601,7 пин тенкĕ парса пулăшнă.

Хваттерсемпе тивĕçтересси ытти енсемпе те пулса пырать. «Ветерансем çинчен» тата «Раççей Федерацийĕнче инвалидсене социаллă хӳтлĕх парасси çинчен» федераллă саккунсемпе килĕшӳллĕн 2 хваттер, Чăваш Республикин «Çурт-йĕр хутшăнăвĕсене йĕркелесси çинчен» Саккунĕпе килĕшӳллĕн 1 çемьене хваттер уйăрса панă.

Сăн ӳкерчĕксенче эсир Тойкилтĕ ялĕнче иртнĕ çул туса лартнă Васильевсен пурăнмалли хăтлă çуртне тата çемье членĕсене куратăр. Андрей Евтихеевич шкулта каçхи хуралта ĕçлет, Людмила Вячеславовна вара кунтах технологие вĕрентет. Хĕрĕсем Настя çак шкулти 2-мĕш класа çӳрет, Софья 2 çулта кăна-ха.

Андрейпа Людмила çамрăк çемьесене паракан çăмăллăхпа усă курма шутланă, кредит илнĕ. 3 уйăх хушшинче пурăнмалли çурт-йĕр çавăрма хал çитернĕ. Хыççăн вара каялла тавăрса памалла мар патшалăх субсидине те илнĕ. Хальхи вăхăтра çурт-йĕр çавăрма çăмăлах мар. Паллах, тăванпĕлĕшсен, пускилсен пулăшăвĕсĕр пулман ĕнтĕ. Халĕ вара çĕнĕ çуртра хăтлă та илемлĕ. Çывăх вăхăтрах çамрăксем йăлана кĕнĕ тăрăх çĕнĕ пӳрт ĕçкине уявлама палăртаççĕ. Килĕшӳпе çураçу, телей сунар эппин вĕсене çемье пурнăçĕнче.

В. ШАПОШНИКОВ.

Хисеп хăми –

Чăваш ял хуçалăх институтĕн зооинженери факультетĕнчен вĕренсе тухнă Нина Михайловна ЧАПЛИНА чĕрĕк ĕмĕр ĕнтĕ ăратлă выльăх ĕрчетекен "Свобода" хуçалăх-заводра зоотехник-селекционер пулса ĕçлет. "Ял хуçалăх институтĕнче вĕреннишĕн пĕрре те ӳкĕнместĕп", – тет хуçалăхра ăратлăха тивĕçлĕ шайра тытса пыма вăй хуракан тĕп зоотехник-селекционер. Унăн тăрăшулăхĕпех сыснасен пысăк шурă ăратĕнче "Свободовский тип" хăйĕн вырăнне тупрĕ. Нина Михайловнана ĕçри тăрăшулăхне пысăка хурса хакласа иртнĕ çулсенче «Чăваш Республикин ял хуçалăхĕн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ят пачĕç. Кăçал вара вăл районти 2006 çулхи чи лайăх зоотехник хăйава тивĕçрĕ.

Сывă выльăхран çеç çын сывлăхĕшĕн сиенлĕ мар ытлă-çитлĕ продукци илме пулать. Çакăнта, вăрттăнлăх мар, выльăх тухтăрĕн пĕлтерĕшĕ мала тухать. Орининти ветеринари участокĕн заведующийĕ Валерий Нилович ШИДИКОВ хăйне çирĕплетсе панă участокра ветеринари мероприятийĕсене вăхăтра та пысăк пахалăхпа пурнăçлассине хăйĕн пĕрремĕш тĕллевĕ тесе шутлать. Ветеринари ыйтăвĕсемпе вăл кунсеренех "Оринино" ял хуçалăх производство кооперативĕн территорийĕнче, кунти ял тăрăхĕнчи пулăшу кĕтекен ял çыннисем патĕнче. Ĕçне кура хисепĕ. Вăл районти 2006 çулхи чи лайăх ветеринари ĕçченĕ.

Районта сыснасене типĕлле тăрантарас технологие пуринчен малтан алла илнисен шутĕнче Ярапайкасси ял тăрăхĕнчи "Лидер" агрофирма" чикĕллĕ явапăхлă общество ĕçченĕсем те. Пĕрре алла илнĕ ӳсĕме кунта çилпе вĕçтерме шутламаççĕ-ха. Çакна Лидия Николаевна ВОРОНЦОВА сысна пăхаканăн кăтартăвĕсем те çирĕплетеççĕ. Лидия Николаевна – сыснасем самăртассипе районта пĕлтĕрхи чи лайăх оператор. 2006 çулта вăл хăй ушкăнĕнчи кашни сыснана талăксерен 736 грамм ӳт хуштарса пĕтĕмпе 19,4 тонна аш туса илнĕ, хуçалăх аталанăвне сумлă тӳпе хывнă.

Эсир сăн ӳкерчĕкре кураканСветлана Васильевна ВЕРШКОВА пĕрремĕш кун мар ĕнтĕ "Оринино" ял хуçалăх производство кооперативĕнче мăйракаллă шултра выльăхсем самăртакан оператор пулса ĕçлет. Орининсем ку ĕçре районти пур хуçалăхсемшĕн те тĕслĕх пулса тăраççĕ. Енчен те самăртма хупнă мăйракаллă кашни шултра выльăх талăксерен пĕр килограмм ытла ӳт хушать пулсан, урăхла пулма та пултараймасть. Çакнашкал ӳсĕме Светлана Васильевна ВЕРШКОВА пек ĕçе чунĕпе парăннă ĕçченсем пурнăçлаççĕ те. Çак ĕçчен хĕрарăм пĕлтĕр выльăхсене пĕтĕмпе 18,9 тонна ӳт хуштарнă.

"Сакăр класс хыççăн ферма ĕçне кӳлĕнтĕм те выльăх-чĕрлĕхрен тек уйрăлаймарăм. Йăлтах майлах пăрусем пăхнă çĕрте вăй хутăм, паян та çакăнтах ĕçлетĕп. Çав хушăрах çуратса ӳстернĕ виçĕ ачаран пĕри – Надежда Алексеевна Тимофеева – паян ферма заведующийĕ. Тепри – Вера Алексеевна Николаева – декретлă отпуска кайичченех хампа пĕрле пăру пăхнă çĕрте ĕçлерĕ. Уй-хир ĕçченĕсем иртнĕ çупа кĕр кунĕсенче паха апат çителĕклĕ хатĕрлесе пани паян ăнăçлă ĕçлеме çул уçать. Хам пăхакан 70 пăру хăйсене выçă туйманни ĕçлес кăмăла çĕклет", – каласа парать 2006 çулхи чи лайăх пăру пăхакан хăйава илме тивĕçнĕ Галина Кондратьевна НИКОЛАЕВА (Чкалов яч. хис. хуçалăх).